27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 АВГУСТ 26 ШĂМАТКУН 168(6663) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне МАСЛЕННИКОВА

БАЛТИНА ТĂРĂХĔНЧИ 3-мĕш фронт çарĕсем, наступление малалла туса пырса, паян августăн 25-мĕшĕнче, ТАРТУ (ЮРЬЕВ—ДЕРПТ) хулипе çулсен пысăк узелне—нимĕçсен оборонин Эстони вăта çĕр районĕнчи пысăк çулсене хÿтĕлекен тĕрекленнĕ пăха пунктне—штурмласа туртса илчĕ.

ТАРТУ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах генерал-лейтенант РОМАНОВСКИЙ генерал-лейтенантăн, ЗАХВАТАЕВ генерал-лейтенантăн, АБАКУМОВ генерал-майорăн, МАРТЫНЧУК генерал-майорăн, ФЕТИСОВ генерал-майорăн, СТЕПАНЕНКО генерал-майорăн, КОЛЧАНОВ генерал-майорăн, ШИРЯЕВ полковникăн, ПОТАПОВ генерал-майорăн, КАРАПЕТЯН генерал-майорăн, ДЕМИДОВ полковникăн, НИКАНОРОВ полковникăн, ДОЛГОВ полковникăн, ФОМИЧЕВ полковникăн, БУРАКОВСКИЙ генерал-майорăн, БОРИСОВ генерал-майорăн, БЕСПЕРСТОВ полковникăн çарĕсем; артиллеристсенчен генерал-полковникăн КРАСНОПЕВЦЕВăн, ЛЕОНОВ полковникăн, ФАСТРИЦКИЙ полковникăн, ШАТИЛОВ полковникăн, ВОЛКОВ полковникăн, ДИДЕНКО полковникăн, ЧЕРНЕВ полковникăн, ВОРОНЬКОВ полковникăн, КАМОРНЫЙ полковникăн артиллеристсем; танкăсем çарсем генерал-майорĕн КОЛОСОВăн, ИВАНОВИЧ полковникăн, МОРГУЛИС подполковникăн, СОКОЛОВ подполковникăн, САЛЬНОВ майорăн, ГОРБУНОВ майорăн танкистсем; авиаци генерал-лейтенантăн ЖУРАВЛЕВăн, авиаци генерал-лейтенантăн ФИЛИНАН, ПОДМОГИЛЬНЫЙ подполковникăн, ДОДОНОВ подполковникăн, ПОЛУШКО подполковникăн, АНДРЕЕВ полковникăн, КУЛИШ полковникăн, ЯКОВЛЕВ майорăн, ЗЛОЧЕВ подполковникăн летчиксем; инженер çарсем генерал-майорăн КИРЧЕВСКИН, инженер çарсем генерал-майорăн ЧЕЛУРОВАН, МАРЧАК полковникăн, СОБОЛЕВ полковникăн, СКОРОХОД подполковникăн, АНГЛИЧАНОВ полковникăн, КОРЧАГИН майорăн саперсем; çыхăну çарсем генерал-майорĕн СИНЕЛЬНИКОВăн, КОРПЛЯКОВ подполковникăн, ПОРТЕР майорăн, ДРОБНИС подполковникăн; государство хăрушсăрлăхĕн майорĕн КОСОБОКОВАН, СЕМЕНОВ полковникăн çарĕсем хастарсем пулса тухнă.

Тунă çĕнтерÿсене палăртса, ТАРТУ хулине туртса илнĕ çĕре çапăçусенче уйрăмах палăрнă чаçсене тата соединенисене «ТАРТУСКИ» ятсем пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, августăн 25-мĕшĕнче, 22 сехет те, хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, ирĕке çирĕм тăватă тупăпа çирĕм пĕр хут пĕр харăс персе БАЛТИНА ТĂРĂХĔНЧИ 3-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ТАРТУ хулине туртса илнĕскерсене, салют парать.

Эсир ертсе пырсан çарсене, ТАРТУ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăç нăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи августăн 25-мĕшĕ.

Хула валли çителĕклĕ вутă хатĕрлер

Шупашкар хула совечĕн сессийĕ

Çак кунсенче Шупашкар хула совечĕн XXVI-мĕш сессийĕ пулса иртрĕ. Сесси икĕ ыйту сÿтсе-яврĕ: хула валли вутă хатĕрлесе турттарасси çинчен тата организациллĕ ыйтусем.

Малтанхи ыйтупа хула совет исполком председателĕн заместителĕ Киселев юлташ доклад туса пачĕ.

— Кăçалхи çул хула валли вутă хатĕрлесе турттарас ĕçе пĕтĕмпех хамăр вăйпа туса иртермелле, — тет докладчик. Çак питех те паха ыйту çине тивĕçлипе пăхнă учрежденисемпе предприятисем вутă хатĕрлес ĕçе вĕçлесе пыраççĕ. Сăмахран, маляри станцийĕнче ĕçлекенсем 200 кубометр вырăнне 259 кубометр вутă хатĕрленĕ. 10-мĕш номерлĕ, 2-мĕш номерлĕ ача яслисенче, 13-мĕш номерлĕ ача садĕнче ĕçлекенсем те вутă хатĕрлемелли плана ытлашшипех тултарнă. Пожарнăй охранăра, иккĕмĕш участокри халăх судĕнче, энерготехникумра тата пионерсен çуртĕнче ĕçлекенсем те хăйсене панă задачисене тултараççĕ.

Анчах та, пĕтĕм хулипе илсен, вутă хатĕрлесси тÿсме çук начар пырать. Августăн 20-мĕшĕ тĕлне 132,4 пин кубометр хатĕрлемелле пулнă пулсан, пурĕ те 29,5 пин кубометр кăна хатĕрленĕ. Шупашкар вăрманпромхозĕнче 175 учрежденипе предприяти вутă хатĕрлемелле. Вĕсенчен 63 учреждени çак вăхăта çитсе те вутă хатĕрлеме тытăнман. Хресчен çурчĕ, Заготзерно контори, Древпромсоюз, Çулйĕр управленийĕ, Маслопром, Швейпромсоюз, Сельхозбанк, Чăвашторг тата ытти организацисемпе учрежденисем те вутă хатĕрлес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Государство банкĕн, Сельхозинститутăн, Наркомземăн, Наркомторгăн, Наркомфинăн, Наркомхозăн, Наркомпросăн, Военторгăн, Спецторгăн коллективĕсенче те вутă хатĕрлес ĕç çителĕксĕр пырать.

Хулари пысăкрах организацисемпе предприятисен вăрманпромхозра мар, хăйсем тĕллĕн вутă хатĕрлемелле. Кунта вара ĕç татах та начартарах пырать. Ун пек организацисемпе предприятисем пирĕн 41 шутланаççĕ. Вĕсенчен 17-шĕ кăна вутă хатĕрлеме тытăннă. Сăра завочĕн, çăкăр комбиначĕн, хулари промкомбинатăн, автотранспорт конторин тата пир-авăр фабрикин руководителĕсем вутă хатĕрлес тĕлĕшпе нимĕн те туман.

Чăвашстройтрестăн 4.300 кубометр хатĕрлемелле. Кунта вутă хатĕрлесси çинчен шутламаççĕ те. Çыхăну управленийĕн 1000 кубометр хатĕрлемелле пулсан, 270 кубометр, макарон фабрики 1.140 кубометр вырăнне — 210 кубометр кăна хатĕрленĕ. Кирпĕч завочĕ, тир-сăран комбиначĕ, Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод руководителĕсем те вутă хатĕрлес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Ĕçе малалла та çакăн пекех туса пырсан, хĕллехи вăхăтра пысăк йывăрлăхсем пулма пултараççĕ.

Ку йĕркесĕрлĕхе пĕтермелле. Вутă хатĕрленĕ çĕрте ĕçе тĕрĕс организацилемелле. Рабочисене апат çитерессине йĕркелемелле, вăрманта пурăнмалли тата ĕçлемелли условисене лайăхлатмалла.

Киселев юлташăн доклачĕ тăрăх Плетнев депутат, Арзамасова депутат, Кобяков (Леспромхоз), Самохвалова (Горплан), Никулина (10-мĕш номерлĕ ача сачĕ), Аникеева (мунча), Гутман (врач), Фридман (хула прокуратури), Аникин (хула совет исполкомĕн председателĕ) юлташсем сăмах тухса каларĕç. Çак ыйтупа сесси тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Депутат Петров хуларан ытти вырăна кайнă май хула совечĕн сессийĕ оборона тĕлĕшпе ĕçлекен яланлăх комиссин председателĕ пулма А. Д. Васильева депутата суйларĕ, çав комиссин составне П. М. Скачкова депутата кĕртрĕ. Коммунальнăй строительство комиссийĕн составне Т. Т. Жукова депутата суйларĕç.

Ют çĕршывсенчен килнĕ юлашки хыпарсем

НИМĔÇСЕНЕ БУХАРЕСТРАН ХĂВАЛАСА КĂЛАРНИ ÇИНЧЕН БУХАРЕСТРИ РАДИО ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, августăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Бухарестри радио паян каçхине çапла каланă: Румыни столицине халĕ пĕтĕмпех нимĕçсенчен тасатнă. Вăйлăн çапăçнă хыççăн, Бухарестри аэродром румынсен аллине куçнă.

РУМЫНИРИ ĔÇСЕМ

ЛОНДОН, августăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Каирти радио пĕлтерĕвне парать, унта каланă тăрăх, Румынири çĕнĕ правительство Бухарестри радиостанцирен Румыни халăхне чĕнсе каланă, вăл нимĕçсене хирĕç кĕрешмешкĕн пуçлама чĕннĕ. Пĕлтерÿре çапла каланă: Румыни Германие хирĕç вăрçа тухнă, Германи авиацийĕ Бухарест çине бомбăсем пăрахнă, тенĕ.

ЛОНДОН, августăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Анкараран илнĕ хыпарсем çине кăтартса, Лондонри радио çапла пĕлтерет: Румынири çĕнĕ командованин приказĕ тăрăх, Румыни çарĕсем Трансильвание кĕрсе кайма тытăннă. Унта гражданла румын халăхĕпе Венгри çарĕсем çапăçса илнĕ.

Çав пĕлтерÿсем тăрăхах, Констанцăра румынсемпе нимĕçсен çарĕсем çапăçса илнĕ.

РУЗВЕЛЬТ ДУМБАРТОН-ОКСРИ КОНФЕРЕНЦИН ДЕЛЕГАЧĔСЕНЕ ЙЫШĂННИ

ВАШИНГТОН, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рузвельт ĕпер Шурă Çуртра Думбартон-Оксри конференцин делегачĕсене йышăннă.

ФРАНЦУЗСЕН ШАЛТИ ХĔÇПĂШАЛЛА ВĂЙĔСЕМ ЛИОН ХУЛИНЕ ЙЫШĂННА

ЛОНДОН, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: французсен шалти хĕçпăшаллă вăйĕсем паян ирхине Лион хулине йышăннă.

СССР НАРКОМИНДЕЛĔ КАЛАНИ

Румынире пулса иртекен ĕçсем пирки Совет правительстви çак çулсен апрель уйăхĕнче хăй каланă сăмаха тепĕр хут çирĕплетсе пани кирлĕ тесе шутлать. Совет Союзĕ Румыни территорийĕн пĕр пайне те пулин тытса илме, е Румынин общество йĕркине улăштарма, е Румынин никама пăхăнманлăхне мĕнле те пулин майпа хĕсме шутламасть. Йăлтах урăхла, Совет правительстви румынсемпе пĕрле Румынине фашистла нимĕç пусмăрлăхĕнчен ирĕке кăларса, Румынине çĕнĕрен никама пăхăнман çĕршыв туса хума пулăшать.

Совет Союзĕн Верховнăй командованийĕ çапла шутлать: румын çарĕсем Хĕрлĕ Çарпа çапăçма пăрахсан тата вĕсем, Хĕрлĕ Çарпа алла-аллăн тытăнса, Румынин никама пăхăнманлăхĕшĕн нимĕçсене хирĕç, е Трансильвание ирĕке кăларассишĕн венгерсене хирĕç вăрçма сăмах парассĕ пулсан, Хĕрлĕ Çар вĕсене хĕçпăшалсăрлантармасть, вĕсен пĕтĕм хĕçпăшалне хăйсен аллинчех хăварать, çак хисеплĕ задачăна пурнăçлас ĕçре вĕсене пур майсемпе те пулăшать.

Анчах та Хĕрлĕ Çар нимĕçсен Румыни çарĕсене, румын халăхне пусмăрлас, чуралантарас ĕçе пурнăçласа пыракансене, пĕтерсе тăксан çеç Румыни территорийĕнче вăрçма пăрахма пултарать.

Нимĕç çарĕсене пĕтерсе тăкас ĕçре румын çарĕсем Хĕрлĕ Çара пулăшни — Румыни территорийĕнче часрах вăрçма пăрахмалли тата Румыни союзниксен коалицийĕпе перемири тумалли пĕртен пĕр май пулса тăрать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 24-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 24-мĕшĕнче пирĕн çарсем ТАРТУ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 30 пункта туртса илнĕ, вăл шутра — ТЫРВАНДИ (ТАРТУ хулинчен 3 километр кăнтăртарахра), ЛЭММАТСИ, СОСИЛА, НЫО, КАНИ, ПЯЙДЛА, КАСТОЛАТСИ ятлă пысăк ялсем тата РОПКА ятлă чугун çул станцийĕ.

ИЕЛГАВА (МИТАВА) хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă.

ЛОМЖА хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем çапăçса малалла кайнă, халăх пурăнакан 27 пункта туртса илнĕ, вăл шутра — БАЧЕ МОКРЕ, РАТОВО СТАРЕ, СНЯДОВО, ВРУЛИН, КАЧИНЕК, КОСКУБО, ГЛЕМБОЧ ВЕЛЬКИ, ЖОНСНИК, ЯРТУЗЫ, ПОДБЕЛЬЕ, ПРОСЕНИЦА, ЖОХОВО ятлă пысăк ялсем тата СНЯДОВО чугун çул станцийĕ.

ПРАГĂРАН хĕвелтухăçнерехре тата çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене ăнăçлăн сирсе янă.

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, танковăй соединенисем тата утлă çарпа пехота çав тери хăвăрт наступлени тунине пула, ЯССЫ хулинчен кăнтăртарахра тăшман группировкине аркатса тăкнă та августăн 24-мĕшĕнче тăшман оборонин стратеги тĕлĕшпе паха пулса тăракан тĕреклетнĕ пункчĕсене — РОМАН, БАКЭУ, БЫРЛАД тата ХУШИ хулисене туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 300 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ТЫРГУ-НЯМУ хули, Молдаван ССР-ĕн район центрĕ КАЛАРАШ хули, МУНЧЕЛЬ, САББОАНИ, ДУЛЧЕШТЬ, ТРИФЕШТЬ, КЫРЛИЖИЙ, ВАЛЯ, МАГЕЙ, АВРАМЕШТИ, ГЕРГЕШТИ, ПУЕШТИ, КОСТЕШТИ, АЛБЕШТИ, ОЛТЕНЕШТИ, КРЕЦЕШТИ, БУНЕШТИ, ГРОЗЕШТЫ, ВАРЗАРЕШТЫ, ЛОЗОВА, КАПРИЯНА ятлă пысăк ялсем тата БЫКОВЕЦ, КАЛАРАШ, ШИПОТЕНЬ, КРЕЦЕШТИ, ОЛТЕНЕШТИ, КРАСНА, МУНЧЕЛЬ, ХЭЛЭУЧЕШТИ, МИРНЕШТЬ, РАЯН, ПИСКУ, РУСУЛАЙ, ДАГЫЦА, ГАЛБЕНИЙ ятлă чугун çул станцийĕсем.

Августăн 24-мĕшĕнче фронт çарĕсем тăшманăн 10.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ. Малтанлăха палăртнă тăрăх, Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсем наступлени пуçланнă хыççăнхи 5 кун хушшинче тăшманăн 20.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем татăклăн пулăшнипе, тăшмана çавăрса илмелли ăста маневр туса тата фронтран атакăласа, августăн 24-мĕшĕнче Молдаван ССР-ĕн столицине КИШИНЕВ хулине штурмласа туртса илнĕ. УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, наступление вăйлатса пырса, халăх пурăнакан 250 пункта йышăннă, вăл шутра — Молдаван ССР-ĕн СТРАШЕНИ, КАЙНАРИ, ЛОПУШНА, БАЙМАКЛИЯ, КАНГАЗ, ЧАДЫР ЛУНГА, ТАРАКЛИЯ ятлă район центрĕсем, КОЖУШНА, ДУРЛЕШТЫ, ЯЛОВЕНЬ, ГОРЕШТЫ, ЛЕУШЕНИ, ЧОРЫ, КАРПИНЯНЫ, КУГУРЛУЙ, ФИЛИПЕНИ, ЕНИКИОЙ, БОРЧАК, КАЗАНКЛИЯ, СЕЛИОГЛУ, ДЕЛЖИЕР, БАЙРАМЧА, ЯРОСЛАВКА, КУЛЕВЧА, КАМЧИК, МИХАЙЛЕНЬ, АКМАНГИГ, ЗОЛОКАРЬ ятлă пысăк ялсем тата ЯРГОРА, ЗЛОТЬ, СТРАШЕНИ, РЕВАКА, МЕРЕНЫ, КУЛЕВЧА ятлă чугун çул станцийĕсем.

БЕЛГОРОД-ДНЕСТРОВСКИЙ (АККЕРМАН) хулинчен хĕвеланăçнерехри районра фронт çарĕсем румынсемпе нимĕç çарĕсен группировкине çавăрса илсе пĕтерсе тăкнă. Çак районра 15.000 румын салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ. Нимĕçсен 9-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирне ВЕРНЕР КЛЕПП генерал-майора тыткăна илнĕ. Малтанлăха палăртнă тăрăх, УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем 5 кун хушшинче тăшманăн 27.000 салтакĕпе офицерне яхăн тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Августăн 23-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 90 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 82 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ТИЛЬЗИТ ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛНЕ ЙЫШЛĂН ВĔÇСЕ КАЙСА ТАПАННИ

Августăн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци, йышлăн вĕçсе кайса, Тильзит чугун çул узелне (Хĕвелтухăç Пруссий) тапаннă. Бомбăсем пăрахнине пула, 30 тĕлте пушар тухнă. Тăшманăн çар эшелонĕсем, çар склачĕсем тата станци сооруженийĕсем çуннă. Чугун çул узелĕн çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче горючи тултарнă вырăнсем сирпĕнсе кайнă. Бомбăсем тÿрех пырса тивнине пула, пакгаузсенче пушарсем тухнă. Пушарсем чугунçул узелĕн пĕтĕм территорине ярса илнĕ. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

Пирĕн икĕ самолет хăйсен базисене таврăнман.

Августăн 24-мĕшĕнче кăнтăрла сывлăшри разведка çакна пĕлсе таврăннă: Тильзит чугун çул узелĕнче çĕрле тухнă пушарсем кăнтăрла та çав-çавах çуннă.

☆ ☆ ☆

Тарту хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем хаяр çапăçура тăшманăн пехотнăй дивизине аркатса тăкнă, шоссе çулĕпе тата чугун çул тăрăх малалла куçса пырса, Тарту çывăхĕнчи вырăнсене пырса тухнă. Халĕ нимĕçсен оборонин Тарту хулине кăнтăр енчен хÿтĕлесе тăракан тăрăхĕнче çапăçаççĕ. Пĕр соединени чаçĕсем кун каçиччен тăшманăн 800 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ. 34 тупă, 40 миномет пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн авиаци нимĕç çарĕсен çулйĕрĕсене пыра-пыра çапнă. Бомбăсем пăрахса штурмласа, 20 чугун çул вагонĕ, 60 автомашина тата çар хатĕрĕсем тиенĕ 70 лав пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 38 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Иелгава (Митава) хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман атакисене сире-сире янă. Пĕр участока нимĕçсем 100 танкпа хăй тĕллĕн çÿрекен тупă илсе пынă та вĕсене пурне те пĕр харăсах çапăçăва кĕртсе янă. Пирĕн разведка тăшман мĕн тума хăтланнине вăхăтра пĕлнĕ. Советсен танковăй тата артиллери чаçĕсем тăшман пымалли çулсем çинче засадăсем тунă та тăшмана виçĕ енчен çунтарма тытăннă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă 40 танкĕ тăрса юлнă. Нимĕçсен ирĕксĕрех каяллла чакма лекнĕ. Тăшман кун хыççăн та атакăсем тунă. Анчах та вĕсем пĕри те ăнăçлă пулман.

* * *

Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă. Тыргу-Фрумос хулинчен кăнтăртарахра совет чаçĕсем тăшманăн темĕн чухлĕ оборона сооруженийĕсем туса тултарнă вăйлă çирĕплетнĕ тăрăхĕ патне пырса тухнă, çапăçусем пуçланса кайнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн çăмăллăн куçакан соединенисем тăшманăн укреплениийĕсене аякран кайса çавăрса илнĕ, Серет шывĕ урлă каçнă, унтан, сартăк пырса çапса, румынсен Роман хулине туртса илнĕ. 46 тупă, темиçе çар склачĕ тата ытти трофейсем те тытса илнĕ. Çав тери хăвăрт наступлени туса пырса, пирĕн çарсем Роман хулинчен кăнтăралла 40 километр кайнă та Бакэу хулине туртса илнĕ. Пирĕн ытти чаçсем Яссы хулинчен 110 километр кăнтăртарахра ларакан Бырлад хулине туртса илнĕ. Хуши хули районĕнче уйрăмах хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Пирĕн чаçсем тăшман оборонине çĕмĕрсе тăкнă та урамсенче вăйлă çапăçнă хыççăн Хуши хулине йышăннă. Трофейсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсем, Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсем татăклăн пулăшнипе, паян Кишинев хулине штурмласа туртса илнĕ. Совет чаçĕсем тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та Кишинев хулин çурçĕр-хĕвелтухăç тата хĕвелтухăç хĕррине вăркăнса кĕрсе кайнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн танксемпе мотопехота Кишинев хулине кăнтăр енчен çавăрса илнĕ. Вара пĕрле штурмласа, тăшмана аркатса тăкнă. Молдавансен Советлă Социализмлă Республикин столицине Кишинев хулине гитлеровецсенчен тасатнă. Белгород-Днестровский (Аккерман) хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн танкистсемпе пехотинецсем тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсемпе румынсен йĕркерен тухнă темиçе пин салтакĕпе офицерĕ алăри хĕçпăшала пăрахса тыткăна паранна. Пирĕн пĕр соединени кăна 80 тупă, çар хатĕрĕсем тиенĕ 9 поезд тата 2.000 лаша тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 201-мĕш охраннăй дивизийĕнчи 406-мĕш полкăн пирĕн çарсем тыткăна илнĕ командирĕ подполковник Адольф фон Папен нимĕçсен юлашки вăхăтченех Турцире посол пулса ĕçленĕ Франц фон Папенăн çывăх хурăнташĕ иккен. Вăл çапла каласа кăтартнă: «Лепель хули районĕнче ман полка вырăссем çавăрса илчĕç. Эпĕ салтаксене чылаях пĕрле пухрăм та, вăрмансем урлă пырса, фронт линийĕ урлă каçса кайма хăтлантăм, анчах та ку ĕç манăн путланса ларчĕ. Отрядăн пĕр пайне партизансем вĕлерсе пĕтерчĕç, ыттисем Березина шывĕнче тата ытти юханшывсенче те путса вилсе пĕтрĕç, ыттисем тыткăна парăнчĕç».

Юлашкинчен Адольф фон Папен çапла каланă: «Эпĕ камне пăхсан тата хурăнташри çыхăнусем тăрăх та, эпĕ нимĕç аристократĕ пулса тăратăп. Эпĕ пĕрмаях офицерсем хушшинче пулнă, çавăнпа офицерсем хушшинче мĕнле шухăш-кăмăлсем пуррине лайăх пĕлетĕп. Гитлер Совет Союзне хирĕç вăрçă пуçласа ярсанах нимĕç çарĕ хĕвелтухăçнелле инçе кайсан, офицерсен ушкăнĕнче пурте пĕр шухăшлă пек курăнатчĕ. Каярахпа вара, нимĕç çарĕсене хĕвелтухăçĕнче пысăк пораженисем тÿстернĕ хыççăн, Германие çак вăрçăра татăклăнах аркатса тăкасси куçкĕретĕнех палăрма тытăнсан, çакă курăнчĕ: малтанхи пĕр шухăшлăх çирĕп пулман иккен. Офицерсем нумайĕшĕ, пуринчен ытларах ваттисем, Гитлера хирĕç тарăхнине час-часах палăртма пуçларĕç. Çакна ăна эпĕ лайăх паллакан генералсем Гитлера хирĕç пыракан шухăшсем çивĕччĕн каланинчен курма пулать. Гиммлер тĕлĕшпе калас пулсан, пĕр ÿстермесĕрех çапла калама пулать: ăна нимĕç çарĕнче никамран та ытларах курайманçĕ. Ăна пур офицер та курайман, ăна выльăх пусакан теççĕ. Эпĕ çапла шутлатăп: Гиммлера çĕнĕ вырăна лартни (эпĕ ун çинчен тыткăна лекнĕ хыççăн пĕлтĕм) нимĕç çарĕнче, пуринчен те малтан офицерсем хушшинче, пурне те тарăхтарнă. Офицерсем лайăх пĕлсе тăраççĕ: Гитлерпа Гиммлер нимĕç çарне аркатса тăкассинчен нимĕнле майпа та çăлса хăварма пултарас çук. Эпĕ хам та Германи çĕнтерессе шанмастăп. Унтан та ытларах, эпĕ çак вăрçăра Германи чăннипех аяла пулать тесе шутлатăп. Ман шутпа нимĕç çарĕ пĕтсе ларас кунсем таччăнах çывхарса çитрĕç ĕнтĕ».

ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче

ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, МТС-сенчи çамрăксен трактор бригадисен, çамрăк трактористсемпе трактористкăсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн çураки вăхăтĕнчи итогĕсене пăхса тухса, пирĕн республикăри Шăхасан МТС-ĕнчи И. Т. Тимофеева юлташ ертсе пыракан трактор бригади мала тухнине палăртнă, ăна ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн иккĕмĕш премине илме, Ишлей МТС-ĕнчи Н. И. Елахова юлташ ертсе пыракан трактор бригадине виççĕмĕш премине илме кандидата тăратнă. Çуракинче кăтартуллă ĕçленĕшĕн Çĕмĕрле МТС-ĕнчи трактористă Оськин юлташа ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн премине илме кандидата тăратнă.

Колхозсенчи вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен çамрăксен звенисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕнче 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен малтанхи тапхăрĕнче мала тухнă Красноармейски районри «Красный Борденер» колхозри çамрăксен звенине (звеновочĕ Р. Петрова) тата Куславкка районĕнчи «Ударник» колхозри çамрăксен звенине (звеновочĕ Черкасова) ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн 3-мĕш премине илме кандидата тăратнă.

Шупашкарти пир-авăр фабрикинчи двухсотница Яшина юлташ.
Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.

ÇĔНĔ НОРМĂСЕМПЕ ĔÇЛЕМЕ ТЫТĂННĂ ХЫÇÇĂН

Кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод коллективĕ çĕнĕ нормăсемпе ĕçлеме тытăнчĕ. Июль уйăхĕнчи итогсем çĕнĕ нормăсене тĕрĕс тунине çирĕплетсе параççĕ. Çав нормăсене тултарман цехсем пачах пулмарĕç.

Çĕнĕ нормăсене ĕçе кĕртни ĕç тухăçлăхне ÿстерме пулăшнипе пĕрлех, рабочисен ĕç укçине ÿстерме те майсем туса парать. Çапла, фрезеровщица Кузьмина юлташ çĕнĕ нормăсене ĕçе кĕртиччен 1.500 деталь вырăнне 3100 деталь тунă, куллен 20 тенкĕ ĕçлесе илнĕ. Çĕнĕ норма тăрăх вăл 1670 деталь тăвас вырăнне 4000 деталь тăвать, 23 тенкĕ ытла ĕçукçи илет. Кун пек примерсене нумай илсе кăтартма пулать.

Çĕнĕ нормăсене, пĕтĕмĕшпе илсен, ирттерсе тултараççĕ пулин те, вĕсене тултарман рабочисем те пур-ха. Çакна ăна, пуринчен ытла, цех руководителĕсем ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн тивĕçлипе кĕрешмен çĕрте, ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен çĕрте курма пулать.

Хуçалăх руководителĕсен, партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсен хисеплĕ задачи — çĕнĕ нормăна кашни рабочи тултармалла тăвасси пулать. Çакна тума политикăллă-массăллă ĕçе лайăхлатни, малта пыракансен опытне анлăн сарса пыни, социализмлă ăмăртăва вăйлатни кирлĕ.

Çур çул планне 204 процент тултарнă

Шупашкарти катка-пичке тăвакан завод социализмлă ăмăртура пĕрремĕш вырăн йышăннă. Завод коллективĕ 1944 çулхи малтанхи çурçул планне 204 процент тултарнă. Çакăншăн ăна вăрман промышленноçĕнчи работниксен Обкомĕн тата Чăваш республикинчи «Спартак» конторин куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне панă. Паха тĕслĕхсем кăтартнăшăн Еронов, Калинкин, Павлова тата ытти юлташсене преми панă, вĕсене «Отличник Наркомторга СССР» значокпа наградăлама тăратнă.

Завод коллективĕ июль уйăхĕнчи заданине те 251 процент тултарнă. Завод инженерĕ Еронов юлташ июль уйăхĕнче катка-пичке тумалли çĕнĕ инструмент шухăшласа кăларнă. Унпа усă курни катка-пичке туса кăларассине 10 хут ÿстернĕ.

Халĕ завод коллективĕ социализмлă ăмăртура илнĕ обязательствăсене ирттерсе тултарассишĕн кĕрешет.

Плана ирттерсе тултарассишĕн

ОКТЯБРЬСКОЕ. Инвалидсен Чкалов ячĕпе тăракан артелĕ производство программине август уйăхĕнче те иртнĕ уйăхсенчи пекех ăнăçлă тултарассишĕн кĕрешет. Артель иртнĕ икĕ уйăх хушшинчи плансене 153-шер процент тултарнă. Август уйăхĕнчи плана ăнăçлăн тултарассишĕн урана тăхăнмалли япаласем тăвакан цех уйрăмах тимлĕн тăрăшать. Çак цехри Ефремов, Итугин тата ытти юлташсем те кулленхи ĕç нормине 165—170 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Артелĕн вĕрен явакан çĕнĕ цехĕ ĕçлеме пуçларĕ. Унта виçĕ çын ĕçлет. Вĕсем колхозсем валли планран ирттерсе темиçе вуншар тăрăх вĕрен явса панă.

„Авангард" артелĕн çитĕнĕвĕ

Канашри «Авангард» артель коллективĕ Отечественнăй вăрçă çулĕсенче производствăна аталантарас тĕлĕшпе çĕнĕ çитĕнÿсем турĕ. 1943 çулта вăл 1940 çулхинчен виçĕ хут ытларах продукци туса кăларнă, артель членĕсен хисепĕ икĕ хут çурă ÿснĕ. Производство планне ирттерсе тултарнăшăн артель коллективĕ 7 хутчен Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулнă.

Кунта вăрçă вăхăтĕнче çĕнĕ производствăсем ĕçе кĕнĕ, подсобнăй хуçалăхăн çĕр лаптăкне виçĕ хут ытла ÿстернĕ. Квалификациллĕ кадрсем хатĕрлес, килсенче ĕçлекен алăстаçăсене артеле явăçтарас енĕпе сахал мар ĕçсем тунă.

Артелĕн пĕтĕм ĕçне вырăнти чĕртавартан Хĕрлĕ Çарпа ĕççыннисене кирлĕ таварсем ытларах туса кăларас тĕлĕшпе йĕркеленĕ.

Артель, производство планне хисеп енĕпе ăнăçлăн тултарнипе пĕрлех, продукци хакне йÿнетес тĕлĕшпе те чылай çитĕнÿсем тунă. Ĕç тухăçлăхĕ 1944 çулта, 1941 çулхипе танлаштарсан, икĕ хут ÿснĕ.

«Авангард» артель хăйĕн çитĕнĕвĕсене ертсе пыракан кадрсене тĕрĕс вырнаçтарса тухнипе, ĕçе пĕлсе йĕркеленипе тунă.

А. ФИЛАТОВ.

16 художество музейĕ уçăлать

Искусство ĕçĕсен комитечĕ йышăннă тăрăх, кăçал РСФСР-та 16 художество музейне юсаса ура çине тăратаççĕ е çĕнĕрен уçаççĕ. Вĕсене Калуга, Тула, Дон çинчи Ростов, Краснодар, Куйбышев хулисенче тата РСФСР-ти ытти хуласенче те уçаççĕ. (ТАСС).

Тырпулшăн кĕрешни—çĕнтерӳшĕн кĕрешни

Малалла тапăнса пыракан Хĕрлĕ Çара колхоз уйхирĕнче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени пулăшар!

Пирĕнпе ăмăртакан Мари республикинче тырпул пухса кĕртес ĕç мĕнле пырать

ЙОШКАР-ОЛА, августăн 25-мĕшĕ. (Телеграфпа). Августăн 20-мĕшĕ тĕлне тырăсем вырасси республикăри колхозсем 51,2 процент, капана хывасси 29,3 процент тултарнă, авăн 27,4 процент çапнă. Кĕрхи тырăсем акассине 25,8 процент тултарнă.

Республикăра Звениговo районĕ малта пырать, унта пĕтĕм тырпулăн 59 процентне вырса пухнă. [illegible] Комбайнер Григорий Новоселов пĕр комбайнпа 300 гектар вырса пухнă.

Мари-Турекски районри колхозсем икĕ хутчен хĕрлĕ обоза тырă леçнĕ, августăн 20-мĕшĕнче çак район государствăна 100 тонна тырă панă.

Вăрнар районĕ кĕрхи тырăсене акса пĕтернĕ

ВАРНАР, августăн 25-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Вăрнар районĕ паян кĕрхи тырăсене акса пĕтерчĕ.

МТС çулталăкри плана тултарчĕ

ЯЕПРЕÇ, августăн 25-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). МТС паянхи кун тĕлне тракторсемпе тумалли çулталăк плана [illegible] 101 процент тултарчĕ. [illegible] паянхи кун тĕлне 12 комбайнпа 1015 гектар вырса пухнă.

Г. ИВАНОВ,
МТС директорĕ.

РАЙСОВЕТ СЕССИЙĔ ТЫРПУЛ ПУХСА КĔРТЕС ĔÇ ÇИНЧЕН

ЭЛЕК. (Телефонпа). [illegible]

18 колхоз ыраш акса пĕтернĕ

ЧУРАЧĂК, августăн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем паянхи кун тĕлне 6.938 гектар ыраш акса, плана 92,6 процент тултарнă. Вăл шутран 59 процентне сеялкăсемпе акнă. 18 колхоз ыраш акса пĕтерчĕç. Паян тата 26 колхоз ыраш акса пĕтереççĕ. Ыраш акас ĕçĕн пахалăхĕ пур тĕлте те лайăх. Августăн 26-мĕшĕ тĕлне район ыраш акмалли плана пĕтĕмпех тултарать.

В. КРАСНОВ.

Шупашкарти хатĕрлев пунктĕнче. Н. ДАНИЛОВ фотокĕрчĕкĕ.

Государство умĕнчи парăмсене парса татнă

СЕНТЕР, августăн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). [illegible] П. ИСАЕВ.

Çĕрле те авăн çапаççĕ

СОВЕТСКОЕ, августăн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). [illegible] Я. СИГАЕВ.

Вăкăрсемпе анлăн усă кураççĕ

ЕЛЧЕК, августăн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). [illegible]

Паянхи кун тĕлне колхозсен уйхирĕнче 396 ĕне-вăкăрпа усă кураççĕ тата 213 пуç кӳлсе ĕçлеме вĕрентеççĕ.

«Осоавиахим» колхозра 13 вăкăрпа 32 гектар çинчи кĕлтене турттарса капана хывнă. Кунта 5 вăкăрпа Пăва хулине государство валли тырă турттараççĕ. Вăкăр кӳлнĕ урапа çине 4—4,5 центнер тырă тиеççĕ. Чăваш Тăрăнĕнчи «Авангард» колхозра 11 вăкăра тата 5 ĕнене кӳлсе çӳреççĕ. Çапла вара 15 ĕне-вăкăрпа çак [illegible] Кунта Муллин çаврăнăçусăррине пула тырпулсене пухас ĕç кая юлса пырать.

Районра халĕ колхозсен пĕрлештернĕ вăкăрĕсемпе ытларах усă кураççĕ. Колхозниксен ĕнисемпе тата вăкăрĕсемпе усă курманпа пĕрех. Кĕлте турттарса капана хывас тата государствăна тырă парас ĕçе хăвăртлатас тесен, колхозниксен ĕнисемпе те усă курмалла.

С. МАКАРОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Сехет пек тикĕс ĕçлеççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Вăрнар районĕнчи колхозниксем чĕннипе «Опыт» колхоз членĕсем Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт пама право илессишĕн социализмлă ăмăртăва тухрĕç. Колхозниксем хăйсен умне çакăн пек задача лартрĕç: пĕтĕм тырпула август уйăхĕнче вырса пĕтерсе, октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне государствăна çĕрулми, пахча-çимĕç, тырпул памалли обязательствăсене пĕтĕмпех пурнăçламалла.

Колхозăн тырă вырмалли паянхи куна 40 гектар пур. Ăна çак уйăх вĕçленнĕ тĕле вырса пĕтерессишĕн колхозниксем ырми-канми ĕçлеççĕ. Ыраша планпа 9 кун вырас вырăнне 5,5 кунта вырса пĕтернĕ. М. Иванова, А. Сятова, Н. Демидова, С. Иванова, М. Степанова, Н. Михайлова тата ытти колхозницăсем талăкри ĕç нормине кулленех 200—250 процент тултарса ĕçлеççĕ. 74 çулхи Матрена Никитина та çамрăксенчен юлмасть. Вăл хире кăвак çутăпа тухса, сĕм тĕттĕм пуличчен ĕçлет. Кулленхи нормăна 200 процент тултарса пырать.

Ку колхозра ĕçĕн хăвăртлăхĕпе пĕрлех, пахалăхĕ çине те тимлĕн çаврăнса пăхаççĕ. Пахалăх — пирĕн ĕçĕн чапĕ, теççĕ колхозниксем. Пучах пухма шкулта вĕренекен ачасенчен отряд тунă. Отряда Т. Матвеева учительница ертсе пырать. Ачасем колхоза 2 центнер пучах пухса панă та ĕнтĕ.

Кĕрхи тырăсене августăн 22-мĕшĕ тĕлне акса пĕтерчĕç. Акасса сеялкăсемпе акнă, агротехника мероприятийĕсене тĕплĕн пурнăçласа пынă. Государствăна тырă параççĕ. Транспорт бригади лайăх ĕçлет, графика тултарса пырать. Çавăн пекех колхоз аш-какай, çăм, çăмарта парса татнă. Сĕт-çу обязательствине сентябрĕн 1-мĕшĕччен парса татаççĕ.

И. АНДРЕЕВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ПИРĔН ПАРТОРГАНИЗАЦИ МĔНЛЕ ĔÇЛЕТ

Шуркассинчи территориальнăй парторганизаци Отечественнăй вăрçă кунĕсенче хăйĕн ĕçне нумай лайăхлатрĕ. Организацири коммунистсем хăйсен ĕçри ответлăхне ӳстерчĕç, колхозниксен массипе таччăн çыхăнса ĕçлеме пуçларĕç.

Партире тăман колхозниксемпе стахановецсем хушшинче ĕçлесси — парторганизацин чи пысăк ĕçĕсенчен пĕри. Вĕсене куллен вĕрентсе пырса, парти тавра таччăнрах пĕтĕçтерсе пымалла.

Çак тĕлĕшпе пирĕн парторганизаци чылай ĕçсем тунă. 1944 çулта эпир малта пыракан колхозниксемпе колхоз руководителĕсене 5 çынна ВКП(б) членне, виçĕ çынна ВКП(б) членĕн кандидатне илнĕ. Камсем-ха вĕсем?

Сидоров юлташ Отечественнăй вăрçă пуçлансанах фронта тухса кайнăччĕ. Нимĕç захватчикĕсене совет çĕршывĕнчен тасатассишĕн çапăçса, вăл аманнă. Правительствăн икĕ орденне илме тивĕçлĕ пулнă. Парторганизаци, унăн пултарулăхне хакласа, ăна ВКП(б) членĕн кандидатне илчĕ. Колхозниксем ăна Сталин ячĕпе тăракан колхозăн председателĕ пулма суйларĕç. Сидоров юлташ колхоза начар мар ертсе пырать.

Çавăн пекех парти ретне илнисем хушшинче Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ А. Ильин, «Борец» колхозри фермăсен заведующийĕ С. Андреев, Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри малта пыракан бригадăн бригадирĕ В. Егоров тата ытти юлташсем пур.

Парти ретне çĕнĕрен илнĕ юлташсем хушшинче ĕçлесси тата вĕсене вĕрентсе пырасси — ответлă ĕç. Парторганизаци ку тĕлĕшпе начар мар ĕçлет. Кашни коммунистăн вĕренес кăмăлĕ пысăк, вĕренмесен — коммунист пурнăçпа шай пыраймасть. Çавăнпа та пирĕн организацири коммунистсем Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» çырнă кĕнекине тата парти историн кĕске курсне харпăрхăй тĕллĕн вĕренеççĕ. Кам мĕнле вĕренсе пынине тата темăсене мĕнле ăнланнине кашни уйăхрах икĕ хут тĕрĕсленĕ. Эпир пухусене уйăхра икĕ хутчен ирттеретпĕр. Пуху пуласси çинчен виçĕ кун малтан кашни коммунистах пĕлтеретпĕр. Пуху пуçланас умĕн, йĕрке тунă тăрăх, юлташла калаçу пуçланать. Малтан пĕри хăй мĕн чухлĕ вĕренни çинчен уйрăм темăпа тухса калаçать. Ун хыççăн ăна ыйтусем параççĕ, вăл çавсем çине ответлет. Çапла вара кам мĕнле вĕренсе пынине пĕлме те, начар вĕренекенсене пулăшма та çăмăл.

Парти историне, Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» çырнă кĕнекине тата парти уставĕпе программине уйрăмăнах А. Ильин, В. Егоров, И. Романов коммунистсем лайăх вĕренеççĕ, ыттисене те пулăшаççĕ.

Парти пухăвĕ—коммунистсемшĕн шкул пулса тăрать. Çавăнпа та пухăвăн кун йĕркисене малтанах тĕплĕн шухăшласа хатĕрлемелле. Эпир, пухусен планĕсене малтанах туса, мĕнле ыйтусем сӳтсе-явассине çирĕплететпĕр. Пуху решенийĕсене коммунистсем мĕнле пурнăçласа пынине яланах тĕрĕслесе тăратпăр. Малтан пулнă пухăвăн решенийĕсене пурнăçлани çинчен çитес пухурах кĕскен калаçатпăр.

1944 çулта пирĕн 15 пуху пулнă. Вĕсен решенийĕсене пурне те тенĕ пекех пурнăçланă. Тырă вырма тухас умĕн коммунист пулса тăракан колхоз председателĕсен отчечĕсене итленĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн уборка планне сӳтсе-явса кăтартусем панă.

Коммунист Сильвестров юлташ машиновед пулса ĕçлет. Ăна коммунистсен пĕр пухăвĕнче машинăсене хăвăрт юсаса çитерме хушса хăварнăччĕ. Анчах та вăл пуху решенине кăтартнă вăхăтра пурнăçламарĕ. Пухура ăна çавăншăн асăрхаттарнă, çакăн хыççăн вăл хушнă ĕçе пурнăçларĕ. Пуху решенийĕсене вăхăтра пурнăçлани пĕтĕм ĕçсене йĕркеллĕ туса пыма пулăшать.

Пирĕн парторганизацири кашни коммунистăн уйрăм поручени пур. Çав поручениссене пурнăçа кĕртнĕ май, коммунистсем хуçалăха ертсе пыма та вĕренеççĕ, хăйсен политикăллă пултарулăхне те ӳстерсе пыраççĕ.

П. АЛЕКСАНДРОВ,
Чурачăк районĕнчи Шуркассинчи территориальнăй парторганизаци секретарĕ.

Хĕле хатĕрленеççĕ

Сĕнтĕр районĕнчи Калайкасси ялсоветне кĕрекен «Марксист» колхозра выльăх-чĕрлĕх витисене пурне те юсаса çитерчĕç. Унсăр пуçне 50 пуç вырнаçмалăх сурăх вити туса лартрĕç. Халĕ выльăх витисене ăшăтас тĕлĕшпе пикенсех ĕçлеççĕ.

П. П.

Кăнтăр Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Поркэроль утравĕ çинчи гарнизон Америка крейсерĕсен экипажĕсене парăннă. Çав утрав çинче 200 çынна ытла тыткăна илнĕ.

Адриатика секторĕнче акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем Метауро шывĕн çыранĕсенче хытă çирĕпленсе ларнă. Вĕсем халь тăшманăн çав юханшывăн çурçĕр хĕрринчен 12 мильăра тунă вăйлă позицийĕсем умĕнче тăраççĕ. Арно шывĕн тури юхăмĕнче 8-мĕш армин чаçĕсем чылай малалла кайнă, çав шывăн икĕ хĕрринче те темиçе паха пункт йышăннă.

7-мĕш армин секторĕнче француз çарĕсем Марсель хулине йышăннă, унта чылай çынна тыткăна илнĕ.

Тулон хулинче çаплах урамсенче çапăçаççĕ. Çав хулан пысăк пайĕ союзниксен аллинче.

Марсель хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем Рона шывĕ тăрăх 27 миля малалла кайнă та Салон хулине йышăннă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Кăнтăр Францири, Çурçĕр Италири, Югославири тата Грецири вăрçă объекчĕсене пырапыра тапăннă. Вена хули районĕнчи аэродромсем çине тата нефтьрен тĕрлĕ япаласем тăвакан заводсем çине бомбăсем пăрахнă. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 45 самолетне персе ӳкернĕ. Союзниксен авиацийĕн 29 самолет пĕтнĕ.

ЛОНДОН, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çарĕсем хăвăрт малалла кайнă та французсен шалти хĕçпăшаллă вăйĕсемпе пĕрлешнĕ, Бордо хулине тытса илнĕ.

Америка çарĕсем Швейцари чиккине çитнĕ.

Французсен шалти хĕçпăшаллă вăйĕсем Перпиньян хулине йышăннă.

Нимĕçсем Франципе Испани хушшинчи чиккĕрен тухса кайнă.

СОЮЗНИКСЕН ЭКСПЕДИЦИЛЛЕ ВĂЙĔСЕН ВЕРХОВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔН ШТАБĔ ПĔЛТЕРНИ

Парижран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Корбейль тата Мелен хулисемпе çывăхса ларнă ялсене çитнĕ. Французсен 2-мĕш бронетанковăй дивизийĕ Парижа кĕрсе кайнă. Союзниксен çурçĕрелле куçса пыракан çарĕсем Эвре хулине ирĕке кăларнă, халĕ вĕсем çав хуларан темиçе миля малалла кайнă. Моннэ хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем 5 миля малалла кайнă. Тук шывĕн хĕррине темиçе тĕлте çирĕплетнĕ.

Лизье хули районĕнче вăйлă çапăçусем пыраççĕ, унта тăшман хуларан хĕвелтухăç еннелле тухса каймалли вырăна контроллесе тăракан вăйлă позицисем йышăнса тăрать. Пон-Л'Эвек районĕнче тăшман пирĕн юханшыв урлă каçакан чаçсене хирĕç хытă çапăçать.

Союзниксен çарĕсем, Сена шывĕ тăрăх çурçĕрелле куçса пырса, Эльбеф, Лувье, Пебур хулисене ирĕке кăларнă, Фонтэнбло хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăртарахра Сена шывĕ урлă каçнă. Мо районĕнче Америка çарĕсем Марна шывĕ патне çитнĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн çулйĕрĕсемпе транспорчĕ çине бомбăсем пăрахнă. 500 автомашинăна ытла пĕтерсе тăкнă, юханшывсем çинче 15 суднăна шыва путарнă.

СОЮЗНИКСЕН ЭКСПЕДИЦИЛЛЕ ВĂЙĔСЕН ВЕРХОВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔН ШТАБĔ ПАРИЖА ИЛМЕННИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕнче çапла каланă: французсен шалти хĕçпăшаллă вăйĕсем Парижа йышăннă тесе ĕнер пĕлтерни тĕрĕс мар. Парижри французсем союзниксенчен пулăшу ыйтнăччĕ. Вĕсене пулăшу панă. Парижа ирĕке кăларман-ха. Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕнче тата çапла каланă: Парижа ирĕке кăларасси тĕп тĕллев пулса тăмасть. Тĕп тĕллев, ĕлĕкхи пекех, Германи çарĕсене пĕтерсе тăкасси пулса тăрать, тенĕ.

ВĂТАÇĔР ТАТА ÇУРÇĔР ГЕРМАНИРИ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕМ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНĂ

ЛОНДОН, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăн сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Америкăн 1.300 йывăр бомбардировщикĕ ытла Вăтаçĕр тата Çурçĕр Германири, çавăн пекех тата Германипе Чехословаки чикки çумĕнчи Брюксри нефть заводĕсене тата авиаципе промышленность объекчĕсене ăнăçлăн тапăннă.

КЕЛЬН ХУЛИ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНĂ

ЛОНДОН, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Кельн хулине вăйлăн тапăннă. Рур облаçĕнчи объектсем çине те бомбăсем пăрахнă.

РУМЫНИРИ ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВĂН СОСТАВĔ

ЖЕНЕВА, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Бухарестри радио пĕлтернĕ тăрăх, Румынин Санатеску генерал тунă çĕнĕ правительствине портфельсĕр министрсем пулса çаксем кĕнĕ: Константин Братиану — либералсен партийĕн лидерĕ; Юлиус Маниу — национал-царанистсен (хресченсен) партийĕн лидерĕ; Константин Петреску тата Лукрецкий Патрашкану.

КĔСКЕН

* Союзниксен çарĕсем Кăнтăр Францире Гитлерăн çавăнта пытанса пурăннă тарçине — Францин депутатсен палатин председателĕ пулнă Бюиссона тытнă. Бюиссон юлашки вăхăтра Париж хулинче нимĕçсене тара кĕрĕшнĕ Деапа пĕрле «Эвр» ятлă хаçат кăларса тăнă.

* Тулон хули çывăхĕнче нимĕçсен Шуберт генерал-лейтенантне штабĕ-мĕнĕпех тыткăна илнĕ. Шуберт вăл Кăнтăр Францире администраци управленийĕн начальникĕ пулнă. Вăл Кăнтăр Францире союзниксем тыткăна илнĕ виççĕмĕш нимĕç генералĕ пулса тăрать.

* Августăн 19-мĕшĕнче Китай столицинче Чунцинра питĕ вăйлă пушар тухнă. Пушар 60 миллион долларлăх сиен кӳнĕ.

ВЕНГРИРЕ ПОЛИТИКĂЛЛА ПАРТИСЕНЕ ПУРНЕ ТЕ САЛАТСА ЯНĂ

ЖЕНЕВА, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Будапештри радио пĕлтернĕ тăрăх, Венгри правительствин бюллетенĕнче политикăллă партисене пурне те, вĕсем мĕнле политика тытса пынине пăхмасăр, хупма хушакан распоряжени пичетлесе кăларнă. Партисен пурлăхне полици вăхăтлăха тытса илнĕ. Правительствăн çав распоряженине пăхăнмасан хытă айăплаççĕ, тенĕ бюллетеньре.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Румынири ĕçсем

Антонеску тарни. Михаил королĕн декларацийĕ

(Ют çĕршывсем радиопа пĕлтернисене пăхса тухни)

Августăн 23-мĕшĕнче каçхине Румыни, Англи тата Америка радиостанцийĕсем пĕлтернинчен çакă курăнать. Румынире питĕ тимлĕн сăнамалли ĕçсем пулса иртеççĕ. Антонеску режимĕ ишĕлсе аннă. Августăн 23-мĕшĕнче каçхине Бухарестри радио Румынире çĕнĕ правительство туни çинчен пĕлтерчĕ. Çав правительство пуçĕнче Константин Санатеску генерал тăрать. Çĕнĕ правительствăна Антонеску шайккин Гитлер майлă политикине хирĕç тăнă политикăллă партисен лидерĕсем кĕнĕ. Вĕсем çав политикăна Румынине пĕтерсе лартакан политика тесе шутланă. Правительствăна кĕнĕ лидерсен шутĕнче — либералсен лидерĕ Братиану тата национал-царанистсен (национал-хресченсен) партийĕн лидерĕ Маниу. Швейцарири радио пĕлтернĕ тăрăх, Ион Антонеску, самолет çине ларса, Германие тарнă.

Иртнĕ каç Бухарестри радио Румыни королĕн Михаилăн декларацине пачĕ. Михаил король унта çапла каланă: Румынишĕн çав тери хăрушă сехетре эпĕ, ăна çăлса хăварас тесе, пĕрлешӳллĕ нацисене хирĕç вăрçма пăрахма, наци пĕрлĕхĕн правительствине тума тата, пĕрлешӳллĕ нацисемпе мир туса, çĕршыв ыйтнине пурнăçа кĕртме шут тытрăм, тенĕ. Çак вăхăтран пуçласа, тенĕ Михаил королĕн декларацийĕнче, совет çарне хирĕç тăвакан вăрçă ĕçĕсем чарăнаççĕ тата Великобританипе, Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе вăрçăллă шутланса тăни те пĕтсе ларать.

Бухарестри радио пĕлтернĕ тăрăх, августăн 24-мĕшĕнче Румынин çĕнĕ правительстви заявлени пичетлесе кăларнă, ăна Михаил королĕн декларацийĕ майлă çырнă. «Пирĕн наци пĕтсе ларассинчен çăлса хăварас тесе, эпир вăрçма пăрахасшăн, çак вăрçăра эпир тройственнăй пакт тунă çĕршывсем майлă пулса вăрçрăмăр», тенĕ. Заявленире тата çапла каланă: Мускав, Лондон тата Вашингтон правительствисем Венăри арбитража Румыни тĕлĕшпе тĕрĕс мар тесе шутлани Румыни çарне союзниксен çарĕсем пулăшнипе Çурçĕр Трансильванине ют çĕршыв оккупацийĕнчен ирĕке кăларма май парать. Паянтан вара эпир хамăр пурнăçăн хуçисем хамăрах пулса тăратпăр».

Радиопа панă заявленире çапла каланă: правительство вăрçма пăрахма тата çак шухăша пурнăçа кĕртме кансĕрлеме хăтланнисене пурне те пĕтерсе лартма шут тытрĕ. «Пĕтĕм çĕршыв çак вăрçа, çĕршыва юхăнтаракан вăрçа, пĕтерсе лартасшăн. Çак вăрçăра эпир малтанах аяла пулнă. Пĕтĕм çĕршыв мир тăвасшăн çунса тăрать, анчах та вăл ăна румынсем хăранă пирки мар тăвасшăн. Мир тăвас, румын халăхне ирĕке кăларас ĕçре кансĕрлеме, пирĕн çĕршыва пĕрлешӳллĕ нацисене хирĕç пыракан çак вăрçăран кăлармасăр тытса тăма, çапла майпа ăна калама çук пысăк асап кăтартма хăтланнисене хĕçпăшаллă вăйсем тата гражданла вăйсем ниме пăхмасăр пĕтерсе лартĕç».

Румынире пулса иртекен ĕçсем Берлинри пуçлăхсене хăратса пăрахнă. Çакна çак факт кăтартса парать: августăн 24-мĕшĕнче кăнтăрла çитиччен Берлин нимĕн те шарламарĕ, кăнтăрла иртсен çеç гитлеровецсем, ассăн сывласа илсе, Румынири ĕçсем çинчен пĕлтерчĕç. Унта вĕсем çапла каларĕç: «Румыни государствин руководительне Антонеску маршала вырăнтан кăларнă», Румынире çĕнĕ правительство тунă, терĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах гитлеровецсем Румыни халăхне Германи майлă тăрса çапăçма тата çĕнĕ правительство Хĕрлĕ Çара хирĕç тăма пăрахма хушнине пурнăçа кĕртмесĕр тăма чĕнчĕç. Берлин çак чĕнсе каланине темле «Румынин наци правительстви» тенĕскер ячĕпе пачĕ. Çав «правительство» камран тăни пĕртте паллă мар. Темле пулсан та, гитлеровецсем çав правительствăн пĕр членĕн хушаматне те, çав правительство ăçта пурăнса ĕçленине те калама пултараймаççĕ.

Румынире ĕçсем чăнах та ют çĕршывсен радиостанцийĕсем пĕлтернĕ пекех пулса пыраççĕ пулсан, вĕсем Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче Германипе Румыни çарĕсене аркатмалла пыра-пыра çапнине пула çапла пулса пыраççĕ, тесе шутлама пур сăлтавсем те пур. Гитлер çарĕсене Сталинград патĕнче аркатса тăкнă вăхăтран пуçласа (Сталинград патĕнче румынсен те йышлă вăйĕсем пĕтнĕ), Румынире гитлерла Германи çĕнтерессине ĕненменни тата Антонеску шайкки, Румынине Германин вăрă-хурахла планĕсене пурнăçа кĕртмелли хатĕр туса хунăскер, Румынин наци интересĕсене сутнине ăнланни ытларах та ытларах сарăлса пынă. Совет çарĕсем Румыни территорине кĕрсе кайни Румынире Германие хирĕçле шухăш-кăмăлсене тата вăйлăрах ӳстерме пулăшнă, вăл Антонеску шайккине хирĕç тăнă ушкăнсенчен хăватлă вăй туса хунă, Румыни халăхĕн анлă массисем Германипе халех çыхăнма пăрахма тăрăшнине ӳстернĕ. Апрелĕн 2-мĕшĕнче В. М. Молотов юлташ Совет правительстви ячĕпе çав тери усăн каласа пани те çав шухăш-кăмăлсене ӳстермесĕр тăма пултарайман. В. М. Молотов юлташ апрелĕн 2-мĕшĕнче çапла каларĕ: Совет правительстви, «Румыни территорин мĕнле те пулин пайне тытса илме е Румынири общество йĕркине улăштарма тăрăшмасть, совет çарĕсем Румыни çĕрĕ çине кĕрсе кайни вăрçăра кирлĕ пулнинчен, тăшман çарĕсем хирĕç тăма пăрахманнинчен çеç килет», терĕ. Çапла калани Гитлер пропагандине, Совет Союзĕ Румынин никама пăхăнманлăхне пĕтерсе лартма тăрăшать тесе суя сăмах саракан пропагандине аркатмаллах пырса çапрĕ. Румыни халăхĕн çакна лайăх ăнланса илмелле пулчĕ: гитлерла Германипе пĕрле пĕр урапана кӳлĕнсе пыни унпа пĕрле тĕпсĕр шăтăка анса каяссине пĕлтерет.

Атăл тăрăхĕнчи лесотехника институчĕ çак факультетсене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет: 1) инженерипе экономика факультетне (вăл вăрман материалĕсем парас тĕлĕшпе ĕçлекен инженер-экономистсене вĕрентсе хатĕрлет), 2) вăрман касас тата турттарас ĕçе механизацилемеллине вĕрентекен факультета (вăл вăрман касас тĕлĕшпе ĕçлекен инженер-лесотехнологсене тата вăрман турттарас ĕçĕн инженерĕсене вĕрентсе хатĕрлет), 3) вăрман хуçалăхĕн факультетне (вăл инженерлесохозяйственниксене вĕрентсе хатĕрлет).

Вăрман хатĕрлес ĕçе механизацилеме вĕрентекен факультета илнĕ студентсене вĕреннĕ вăхăтра Хĕрлĕ Çара илмеççĕ.

Пур факультетсене те çак йĕркепе вĕрентме илеççĕ:

а) производствăра ĕçлеме пăрахтарса вĕрентме тата

б) производствăра ĕçленĕ хушăрах вĕрентекен заочнăй отделение илеççĕ.

Института вĕренме кĕрес текенсем çак предметсемпе испытани тытмалла:

1) инженерипе экономика факультетне вĕренме кĕрес текенсен — математикăпа, географипе, Совет Союзĕнчи халăхсен историйĕпе, вырăс чĕлхипе тата литературипе;

2) вăрман касас тата турттарас ĕçе механизацилеме вĕрентекен факультета кĕрес текенсен — математикăпа, физикăпа, химипе, вырăс чĕлхипе, литературипе тата пĕр ют çĕршыв чĕлхипе;

3) вăрман хуçалăхĕн факультетне вĕренме кĕрес текенсен — физикăпа, химипе, вырăс чĕлхипе тата литературипе.

Вăтам шкултан отличник пулса вĕренсе тухнисене икĕ çул хушшинче экзаменсăрах илеççĕ.

Заявленисене августăн 31-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: автобиографи, вăтам шкултан вĕренсе тухнине кăтартакан аттестат, виçĕ фотокарточка, çар тĕлĕшпе мĕнле шутланса тăнине кăтартакан справка (куна çара кайма тивĕçлисен ямалла). Кунсăр пуçне, кашни хăйĕн паспортне кăтартать.

Вĕренме кĕмелли экзаменсем сентябрĕн 1-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинче пулса иртеççĕ. Студент шутне кĕртесси сентябрĕн 21-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче пулса иртет. Отличниксене вĕсен заявленийĕсем пырса çитсенех студент шутне кĕртеççĕ.

Институтăн общежити, столовăй тата пулăшуллă хуçалăх пур.

Лайăх вĕренекен студентсене стипенди параççĕ.

Адрес: гор. Йошкар-Ола, Марийской АССР, Комсомольская, 84 а, Поволжский Лесотехнический Институт им. М. Горького, Приемная комиссия.

Суккăр ачасен Улатăрти специальнăй вăтам шкулĕ суккăр ачасене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Шкула 8 çултан пуçласа 12 çула çитнĕ сĕм-суккăр ачасене тата 10 процентран ытла курайман ачасене илеççĕ. Шкула илнĕ ачасене общежитие вырнаçтараççĕ, апатлантараççĕ тата кирлĕ пек пăхаççĕ.

Вăтам шкулсем паракан пĕлӳсемсĕр пуçне, çав ачасене тата музыкăна, производствăна вĕрентеççĕ.

Вĕренме илме ыйтса çырнă заявленисемпе пĕрле çак документсене ямалла: сывлăх çинчен панă справка, мĕн чухлĕ начар курни çинчен калакан справка тата хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство.

Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Алатырь, Чуварлейский Бор, спецшкола слепых детей.

Шупашкарти 9-мĕш номерлĕ ФЗО шкулĕ платниксем, столярсем, слесарьсем пулма вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

ФЗО шкулĕнче 6 уйăх вĕренмелле.

Шкула 16—17 çула çитнисене илеççĕ.

Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: хăçан çуралнине кăтартакан справка, миçе çул вĕреннине кăтартакан справка тата сывлăх çинчен калакан справка. Вĕренме кĕрес текенсен 4 çул вĕреннисенчен кая пĕлмелле мар.

Вĕренме илнисене кунне виçĕ хутчен апат çитереççĕ, общежитие вырнаçтараççĕ, выртса-тăмалли вырăнсем, тумтир параççĕ.

Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, Левый Берег Волги, почтовой ящик №125.

Шупашкарти апат-çимĕç комбиначĕ уйрăм çынсемпе организацисенчен сыпман улмуççи çинче пулнă панулмисем, шăлан çырли, пилеш, палан, кăмпасем, тĕрлĕ çырласем йышăнать. Çав япаласене паракансене конфет йышши таварсем, тăвар, супăнь тата ытти продуктсем те парать. Адрес: г. Чебоксары, ул. Совхозная, 1.

5—2.

Чăвашсен аш-какай трестне трестра ĕçлеме çакăн пек çынсем кирлĕ: кадрсен отделĕн начальникĕ, секретарь-машинистка, инженер-технологсем, бухгалтерсем, плановиксем, ветеринари врачĕсем, выльăх-чĕрлĕх чĕртавар отделĕн начальникĕ, сбыт тĕлĕшпе ĕçлекен ответисполнитель. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Тельмана, 6, Тел. 5—25

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительле секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ. 00653. Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.